Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21
Путь победыОК
Путь Победы

## Хирпуç территори пайĕ

# ПАЯНХИ ЯЛ

#регпроекты #нацпроекты

Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет

Хирпуç территори пайне 4 ял кĕрет – Уравăш, Утар, Хирпуç, Рункă

# Ырă улшăнусемшĕн тăрăшса ĕçлеççĕ



Пĕрле уявсем ирттерни аван.

**Малтанхипе танлаштарсан яллă тăрăхсен сăн-сăпачĕ палăрмаллах ырă енне улшăнчĕ. Патшалăх тĕревне тата вырăнти хастарсене пула, чăн та, умри йывăрлăхсене çĕнтерме çăмăлрах.**

Хирпуç территори пайĕ 4622 гектар йышăнать. Кунта 4 ялта 1241 çын пурăнать. Пĕтĕмпе 658 хуçалăх. 4 лавкка, пĕр суту-илӳ киоскĕ ĕçлеççĕ, вĕсенчен иккĕшĕ – Калинино райповĕн, ыттисем – предпринимательсен. Хирпуçĕнче тата Уравăшра «Раççей Почтин» çыхăну уйрăмĕсем пур.

Медицина пулăшăвĕпе Хирпуçĕнчи тата Рункăри медпунктсем, Уравăшри пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ тивĕçтереççĕ. «Сывлăх сыхлавĕ» наци проектне пурнăçласа Уравăшри медицина учрежденийĕнче тĕплĕ юсав ĕçĕсем иртнĕ. Офиса сĕтел-пуканпа, ятарлă оборудованипе тивĕçтернĕ.

Аграрлă предприятисем те ку тăрăхра ӳсĕмлĕ ĕçлеççĕ, йăх-несĕлĕмĕрсен ятне ямаççĕ. «Победа» – аталану çулĕпе пыракан ял хуçалăх производство кооперативĕ.



Рункăри çĕнĕ çул.

Выльăх-чĕрлĕх, ӳсентăран отраслĕсенче кăтартуллă ĕçлет.

Хирпуç территори пайĕнче хресчен-фермерсен юхăмĕ те аталаннă. Кашни хастарах хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçлать. Маттурсем – Игорь Ехлаков (Уравăш), Вячеслав Алексеев (Хирпуç), Лариса Федорова (Утар), Денис Авакумов (Уравăш). Вĕсем те хулара тĕпленсех пурăнма пултарнă. Анчах та ĕçченсенче тăван ен туртăмĕ вăйлăрах пулнăран çуралнă тăрăхрах тăрăшаççĕ. Хăшпĕрисем, тен, «хресчен» сăмахран вăтанаççĕ те пуль. Анчах та фермерсем ун пек шухăшламаççĕ. Хресчен – пурне те тăрантаракан. Вăл ырми-канми, кунне-çĕрне уямасăр ĕçленипе ĕнтĕ сĕтел çăкăр-тăварпа, экологи енчен таса продукципе пуян.

Влаç тытăмĕнче вăй хуракансен халăх умĕнче пысăк яваплăх. «Пирĕн тĕллев – хамăрăн ĕçпе çынсен шанăçне тӳрре кăларасси, вĕсен ырлăхĕшĕн тăрăшасси», – терĕ Хирпуç территори пайĕн пуçлăхĕ Алена Александровна Федорова. Вăл – çамрăк ертӳçĕ. Çынсемпе калаçма, кирек мĕнле ыйтăва сӳтсе явма ӳркенмест.

Çул – пурнăç артерийĕ, теççĕ. Пур чухне те çул-йĕре ял çыннисен вăйĕпе кăна çирĕплетме май килмест. Тĕрлĕ ăпăр-тапăр, кирпĕч ванчăкĕсем пăрахса хытарни те пулăшмасть. Хытă сийлĕ çул сарма пулăшакан ятарлă енсем пур. Пуçаруллă бюджет программине хутшăнни, акă, пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама май парать. Укçан пысăк пайне уйăраканĕ – патшалăх, ытти – вырăнти халăхăн. Акă, çитес çул Уравăшра Садовая урамри 6-мĕш çуртран тытăнса Советски урамĕнчи 9-мĕш çуртчен 200 м, Садовăйĕнчи 7-мĕш çуртран пуçласа 14-мĕшĕччен 186 м çула юсама палăртнă. Кăçал рункăсене ăннă. М.Цивиль урамĕнчен пуçласа Канаш урамĕччен çула такăрлатнă. Куншăн пĕтĕм халăх савăнать. Пуçаруллă бюджет программине халăх ырласа йышăнать.

Çамрăк ăрура – малашлăх. Уравăшра çитес çул Первомайски урамĕнче ачапча площадкине хута ярасшăн. Ку тăрăхри çамрăк ăрăвăн ачалăхĕ телейлĕ иртĕр тесе тимлеççĕ. Тĕслĕхрен, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа Хирпуçĕнче савăнăçлă мероприяти йĕркеленĕ. Уява ирттерме Руслан Артемьев пулăшнă. Ялта Çамрăксен кунне хаваллланă мини-футбол турнирне йĕркелеме те вăй çитернĕ. Кунта тĕрлĕ ялсенчи тата Шупашкарти командăсем тупăшнă.

Территори пайĕн пуçлăхĕ ял старостисемпе тачă çыхăну тытса ĕçлет. Палăртмалла, вĕсем ял-йышра ырă ятра. Субботнике йĕркеленĕ чух халăх хисепне тивĕçнисем çынсене хăвăртах пухма пултараççĕ. Яваплăха туякан ял старостисем – Алексей Петров, Игорь Ехлаков, Феликс Васильев.

Хамăр пурăнакан тавралăха вут-çулăмран сыхласси – пĕрлехи ĕç. Шăрăх çанталăкра уйрăмах асăрханулăх кирлĕ. Хирпуç территори пайĕн администрацийĕ тата Игорь Ехлаков тимленипе Санарка шывĕн çыранне, кĕперне çирĕплетнĕ. Игорь Юрьевич хăй Хирпуçĕнче пурăнмасан та çын хуйхи-суйхине чĕри патне илме пĕлет. Бульдозер, экскаватор уйăрнă, техника валли çунтармалли-сĕрмелли материалсене те туяннă. Çавăн пекех Михаил Калистратов, Леонид Ефремов, Алексей Быков, Алексей Петров, Николай Федоров, Иван Федоров, Сергей Дмитриев правурлăх кăтартнă. Вăй хуни харама кайман. Ăнсăртран Хирпуç территори пайĕнчи пĕр лаптăкра типĕ курăка çулăм тивсе илнĕ. Анчах та «хĕрлĕ автан» ташлайман. Пушар машини хăвăртах пĕверен шыв илсе ялкăшакан çулăма сӳнтернĕ.

Кăçалхи типĕ çанталăка пула шыв ыйтăвĕ Утар ялĕнче те çивĕч тăнă. Ку тăрăхра пурăнакансем Игорь Ехлаковран пулăшу ыйтнă. Округ депутачĕ пĕве пĕвелеме пулăшнă.Тепĕр çул пуçаруллă бюджет программипе Рункăна пырса кĕнĕ çĕрте çĕнĕ пĕве чавма плана кĕртнĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене уяни инкек-синкекрен сыхлĕ. Уравăшри ГТС плотинине юсас тĕлĕшпе хатĕрленĕ проектпа смета документацийĕ конкурс витĕр тухнă. Калăпăшлă ĕçе 2024–2025 çулсенче тума палăртаççĕ.

Территори пайĕнче сăваплă вырăнсене тирпейлессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Тавралăха хăтлăлатма та ку тăрăхра пурăнакансем ытларах та ытларах явăçаççĕ, обществăлла ĕçсенчен пăрăнмаççĕ. Хирпуçĕнче пограничниксен юпине тата мемориал хăмине вырнаçтарнă. Çулсерен ку вырăна паттăр салтаксене пуç тайма пухăнĕç.

Клуб – культура вучахĕ. Ентешсемпе пĕрле концертсем курни, тĕрлĕ мероприятисене хутшăнни епле аван. Культура учрежденийĕ чуна кантармалли вырăн. Кунта пур ӳсĕмри çынсене хапăлласах йышăнаççĕ. Хирпуç, Рункă, Уравăш клубĕсенче те Ватăсен кунне анлăн паллă тунă. Анчах та пур ветеран та праçнике çитеймен пирки Хирпуç территори пайĕн пуçлăхĕ Алена Федорова, Елена Голубцовапа Алина Дмитриева специалистсем клуб ĕçченĕсемпе пĕрле ватăсем патне килĕрен çӳренĕ, вĕсене çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул суннă, парнесемпе чысланă. Каласа хăвармалла, Хирпуç клубĕ çумĕнчи «Шăпчăксем» вокал ансамблĕ кăçал Тутарстанри чăваш культурин уявне хутшăнса ырă ята тивĕçнĕ.

Уравăш – Чăваш енĕн географи центрĕ. Шăпах кунта утă уйăхĕнче Мускаври турист клубĕнчи ачасене хапăлласах йышăннă. Вĕсем экспедици вăхăтĕнче чăваш халăх йăли-йĕркисемпе, ал ăстăрĕсен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллашнă. Уравăшсем хăнасене тараават пулнине çирĕплетнĕ.

Ятарлă çар операцийĕ пынă чух Хирпуç территори пайĕнче пурăнакансем те хастарлăх кăтартаççĕ. Маскировка сечĕсене çыхма хутшăнаççĕ, салтаксем валли гуманитари пулăшăвĕ яраççĕ.

Туслă йышпа йывăрлăхсене парăнтарма, çĕнĕ тĕллевсене пурнăçлама пулать. Хирпуç территори пайĕнче малашне те аталану çулĕпе пырса халăх пурăнакан вырăнсене хăтлăх кĕртессипе, пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе тĕллевлĕ ĕçлеме палăртаççĕ.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**

# Пĕрлĕхре – вăй

Тата тепĕр сăваплă ĕç турĕç уравăшсем. Ку хутĕнче масар çинче çĕнĕ пӳрт туса лартрĕç. Унчченхи (кивĕ кĕлетрен тунăскер) çĕрсе, авăнса ларнăччĕ. Хĕллехи вăхăтра ишĕлсе анас хăрушлăх та пурччĕ.

Евгений Архипов ертсе пынипе маттур çынсем 11 кунта туса пĕтерчĕç ăна. Проектне Евгений Алексеевич хатĕрленĕ. Питĕ хăтлă çурт пулчĕ. Ĕç хатĕрĕсене хумалли пĕчĕк кĕлет те пур, алă çума умывальник та çакса панă, чашăк-кашăк хумалли çӳлĕк те ăсталанă.

Масар çуртне хăпартма халăх укçа пухрĕ. 158 çын 300 пин ытла тенкĕ пуçтарчĕ. Уравăшра çуралса ӳснĕ, халĕ аякра пурăнакан ентешсем те тăван вырăна манмаççĕ, май çитнĕ таран пулăшма тăрăшаççĕ.

45 çын вăй хучĕ стройкăра. Кашни валли ĕç тупăнсах тăчĕ. Евгений Архипов халăхпа пĕр тан тимлерĕ. Ăста алăллă çын темĕн тума та пĕлет иккен, сваркăпа та ĕçлет, мăлатукран та хăрамасть. Хастарсене кунне икĕ хут вĕри апатпа тивĕçтернĕ.

Евгений Архипов пачăшкăна илсе килсе çурта тасаттарчĕ – çветтить тутарчĕ. Алексий атте вилнисене асăнса кĕлĕ вуларĕ. Сăваплă ĕçшĕн Евгений Архипов ял халăхне тав турĕ.

**Любовь ЛУКИНА**



Туслă йышпа ĕç ăнать.